Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

31 (7885) № ✻ Юн кун, 2011 ҫулхи ака (апрель) уйӑхӗн 27-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Ял ҫыннине уй-хир чӗнет

Ҫур аки – 2011



*«Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикин ертӳҫи (варринче) ҫур акине хатӗр механизаторсемпе.*

Кӑҫалхи ҫут ҫанталӑк ҫӗр ӗҫченӗн ҫаврӑнӑҫулӑхне татах тӗрӗслеме шутларӗ: ҫанталӑк условийӗсене кура пӗр вӑхӑтра пулса ҫитекен ҫӗрсем кӗске вӑхӑтра хӑйсене шуратса хӑварма ыйтӗҫ. Хатӗр пулӑпӑр-и-ха эпир ҫакнашкал оперативлӑха? Кӳршӗ хуҫалӑхсем ҫур акине тухсан ака агрегачӗ патне пӗрремӗш хут гайка уҫҫине йӑтса пыракан хресчен пирки вӑл малашлӑха ҫирӗп пӑхать тесе епле калайӑн-ха? Кун пек ӗҫлекене, каҫарӑр та, нимӗнле наци проекчӗ те аталану ҫулне уҫса параймасть. Ҫапла шутлать паян «Моргаушская» чӑхчӗп фабрики» уҫӑ акционерлӑ обществӑн генеральнӑй директорӗ Н. Ванеркин. Фабрикӑн мехпаркӗнче ӗҫлекенсем вара ертӳҫӗ сӑмахне ҫирӗплетсе ӗҫе хатӗр техникӑна техосмотр тӑратассипе тимлеҫҫӗ. Кашнин шухӑшӗнчех ҫурхи уй-хир ӗҫӗсем, ака-сухара ҫӗнӗ ӗмӗтсене пурнӑҫа кӗртесси.

Ҫак вӑхӑтра редакцие оперативлӑ хыпар ҫитрӗ. Юнкӑ тӑрӑхӗнчи «ВаСем» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество тракторпа ӗҫлеме кансӗр вырӑнсенчи кӗрхи культурӑсене минераллӑ удобренипе апатлантарас ӗҫе кӳлӗннӗ. Хуҫалӑх ӗҫченӗсем ӗнерхи кун тӗлне 12 гектар ҫинчи кӗрхи культурӑсене аммиак селитри сапса апатлантарнӑ. Хресчен хире тухрӗ пулсан районта черетлӗ ҫур аки пуҫланчӗ.

– Ҫур акине хатӗрленесси вӑл ҫурхи ӗҫ мар. Ку тӗллевпе эпир хӗлӗпех ҫанӑ тавӑрса ӗҫлерӗмӗр. Паян вара эпир ҫурхи акасухана тухма хатӗр. Кӗске хушӑрах кӗрхи культурӑсене 266 гектар ҫинче апатлантарса хӑварасси, ҫӗртме сухи тунӑ 300 гектар ҫинче вӑхӑтра нӳрӗк тытса юлса ҫуртрисем акасси пирӗншӗн йывӑр ыйту мар. Ӑна тума эпир хатӗр. Ҫурхи уй-хир ӗҫӗсен планне пӑхса тухса ҫирӗплетсе хӑвартӑмӑр. Юсавлӑ техникӑна хире тухма хатӗрлесе гаражсене вырнаҫтартӑмӑр. Ҫӗр пулса ҫитессе кӑна кӗтетпӗр, – терӗ Николай Григорьевич Ванеркин. Ҫав вӑхӑтра патшалӑх техника надзорӗн районти инженер-инспекторӗ С. Николаев ӗҫе тухма ирӗк пама тракторсене пӗрин хыҫҫӑн теприне тӗрӗслерӗ.

Фабрика территорине тирпейлессипе ӗҫсем пыраҫҫӗ. «Христос чӗрӗлнӗ!», «Чӑн чӗрӗлнӗ!» тесе пӗр-пӗрне сывлӑх сунакансем умри йывӑрлӑхсенчен хӑраманни, вӗсем ӑна хатӗрри савӑнтарать кӑна.

– Техника тӗрӗслевне тӑратнӑ 8 трактор та ӗҫе тухма ирӗк илчӗ. Маттурсем вӗсен тракторисчӗсемпе инженери службин специалисчӗсем, – терӗ Герман Матвеев инженер-механик ҫине савӑк кӑмӑлпа пӑхса С. Николаев.

Сергей Александровичран районти пӗтӗмӗшле лару-тӑрупа кӑсӑклантӑм. Кунта вара ӳкерчӗк тӗрлӗрен. Акӑ ака уйӑхӗн 23-мӗшӗ тӗлне ҫур акине хутшӑнмалли 233 трактортан 97-шӗ кӑна техосмотр тӑма пултарнӑ. Чкалов яч. хис., «ВаСем», «Фаворит» предприятисенче пур трактор та ҫур акине хатӗр. Суворов яч. хис., «Оринино», «Герой», Ильич яч. хис. хуҫалӑхсенче те тракторсен ытларах пайӗ ӗҫе хатӗр пулсан ыттисен кая хӑвармасӑр татса памалли ыйтусем тулliех. Кая юлас марччӗ!

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## Шкула кайма хатӗрленетпӗр

Вӗрентӳ

***«Ҫитес вӗренӳ ҫулӗнче малтанласа палӑртнӑ тӑрӑх парта хушшине пӗрремӗш хут пурӗ 347 ача ларӗ», – ҫапла пӗлтерчӗҫ район администрацийӗн вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗнче. Ку хальхи вӗренӳ ҫулӗнчипе танлаштарсан 25 ача ытларах. Анчах та ҫакӑ районти вӗрентӳ учрежденийӗсенче вӗренекенсен йышӗ малашне хушӑнса пырассине пӗлтермест.***

Пай пуҫлӑхӗ З.Ю. Дипломатова пӗлтернӗ тӑрӑх вӗрентӳ пайӗнче вӑй хуракан специалистсем районти ял тӑрӑхӗсенче ҫуралакан ачасен хисепӗпе интересленсех тӑраҫҫӗ, ҫулсеренех мониторинг ирттереҫҫӗ. Паллах, цифрӑсем малтанласа палӑртнисем. Апла пулин те ҫитес ҫулсенче парта хушшине ларакансен хисепӗпе паллашма май пур. Акӑ 2011-2012 вӗренӳ ҫулӗнче пурӗ 3661 вӗренекен пулмалла, 2012-2013 вӗренӳ ҫулӗнче – 3585, 2013-2014 вӗренӳ ҫулӗнче – 3521... Цифрӑсем пирӗн шкулсенче ачасем сахалланса пынине кӑтартаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл юлашки ҫулсенче районта ача ҫураласси кӑштах ӳснине шута илсен те.

Раҫҫей Федерацийӗн «Вӗренӳ ҫинчен» федераллӑ саккунпа килӗшӳллӗн ачасене шкула 6 ҫул ҫурӑра вӗренме илме юрать. Паллах, вӗсен сывлӑхӗ енчен хирӗҫлевсем ҫук пулсан. Анчах та пӗрремӗш класа каяканӑн 8 ҫултан аслӑ пулмалла мар.

Ашшӗ-амӑшӗн ачине пӗрремӗш класа ярас умӗн шкула илме ыйтса заявлени ҫырмалла, ачан сывлӑхне кӑтартакан медкарта, ӑҫта пурӑннине ҫирӗплетсе паракан справка тата ҫурални ҫинчен ӗнентерекен хутӑн копийӗ кирлӗ. Вӗсене пурне те шкула памалла.

Ачан ашшӗ-амӑшӗ е саккунлӑ представителӗ ыйтса ҫырнипе вӗрентӳ учрежденийӗн учредителӗ ачана шкула ултӑ ҫул ҫурӑччёнех илме ирӗк пама пултарать. Шкула кайма хатӗрленекен ачана медицина тӗрӗслевӗ витӗр кӑлармалла. Саккунпа палӑртнӑ вӑхӑтчен ачана шкула илнӗ пулсан шкулти гигиенӑпа санитари правилисем уншӑн 6 ҫулхисем пекех пулмалла.

Ашшӗ-амӑшӗ ачине шкула яриччен, паллах, шкулта вӗренӳ мӗнле шайра пулнине те, учительсен ӗҫӗ пирки те, вӗренекенсен ӳсӗмӗсем пирки те ыйтса пӗлме пултарать.

Ашшӗ-амӑшӗсен заявленийӗсене шкулсенче апрелӗн пӗрремӗшӗнчен пуҫласа августӑн 30-мӗшӗччен йышӑнаҫҫӗ. Ҫапла вара ачасене шкула вӗренме йышӑнни ҫинчен шкул директорӗсем августӑн 30-мӗшӗнчен кая юлмасӑр приказ кӑлараҫҫӗ.

Кӑҫал пӗрремӗш класа каякансем ҫӗнӗ стандартсемпе вӗренме пуҫлӗҫ. Пуҫламӑш класс вӗрентекенӗсем ятарлӑ курссенче вӗреннӗ, халӗ ҫӗнӗ учебниксем туянас ӗҫ пырать. Вӗренӗвӗн ҫӗнӗ стандарчӗсем ҫине куҫасси ҫулсерен пулса пырӗ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Республикӑра

## Ҫур аки валли – йӳнӗрех хакпа

Ҫурхи уй-хир ӗҫӗсем пуҫӑнчӗҫ темелле. Палӑртнӑ ӗҫсене вӑхӑтра тата пахалӑхлӑ ирттерес тӗлӗшпе вара хуҫалӑхсене топливӑпа епле тивӗҫтерни те пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Вӗсен хакӗсем «ҫыртни» те ура хурать.

Ҫак кунсенче ЧР Президенчӗ Михаил Игнатьев «Роснефть» нефть компанийӗн «Ульяновскнефтепродукт» акционерсен хупӑ обществин пуҫлӑхӗсемпе тӗл пулнӑ, республикӑри ял хуҫалӑх таварӗ туса илекенсене топливо йӳнӗрех хакпа сутассипе ҫыхӑннӑ ыйтусене сӳтсе явнӑ.

«Роснефть» нефть компанийӗ Чӑваш Республикинчи ял хуҫалӑх таварӗ туса илекенсене 2011 ҫулта йӳнӗрех хакпа ҫунтармалли-сӗрмелли материалсем сутма килӗшнӗ. Ҫакӑ ЧР Правительстви, РФ Ял хуҫалӑх министерстви тата РФ Энергетика министерстви пӗрле калаҫса татӑлнипе май килнӗ.

Ҫапла вара республика валли 16600 тонна дизель топливи уйӑраҫҫӗ. Унӑн пӗр тоннин вӑтам хакӗ 22 пин тенкӗ пулсан ял хуҫалӑх таварӗ туса илекенсем ӑна 16200 тенкӗ ҫинчен кӳрсе килӗҫ.

Май уявӗсенче

**Май уйӑхӗнчи уяв кунӗсенче Раҫҫейре пурӑнакансем апрелӗн 30-мӗшӗнчен тытӑнса майӑн 2-мӗшӗччен тата майӑн 7-мӗшӗнчен тытӑнса 9-мӗшӗччен ӗҫе тухмӗҫ. Кӑҫал майӑн 1-мӗшӗ вырсарни куна тивет. Ҫавӑнпа ку канмалли уяв кунне майӑн 2-мӗшӗнчи тунти куна куҫараҫҫӗ. Ҫӗнтерӳ кунӗ тунти куна тивет.**

Кинофестиваль

## Вак халӑхсен кинематографине халалланӑ

***Шупашкарта ӗнер Пӗтӗм тӗнчери кинофестиваль уҫӑлчӗ. Вӑл апрелӗн 30-мӗшӗччен пырать. Кинофестивале вак халӑхсен кинематографине халалланӑ.***

Тӗнче шайӗнчи кинофестиваль программи пуян. Пилӗк кун хушшинче республикӑра пурӑнакансем илемлӗ, документлӑ, ачасемпе ҫамрӑксен фильмӗсене, киноретроспективсене пӑхса савӑнма пултарӗҫ, кинематографин паллӑ ӗҫченӗсемпе тата журналистсемпе тӗрлӗрен тӗл пулусемпе пресс-конференцисем иртӗҫ, студентсем валли мастер-классем пулӗҫ, конкурса хутшӑнакан тата хутшӑнман, ача-пӑча фильмӗсене кӑтартӗҫ. Фестивалӗн тӗп мероприятийӗсем «Сеспель», «Каскад», Мир Луксор», «Синема-5», «Атӑл» кинотеатрсенче иртӗҫ.

Ҫӗнтерӳҫӗсене ятарлӑ призсем кӗтеҫҫӗ. Кусем вӗсем пӑхӑртан шӑратса тунӑ «Анне» статуэткӑсем – Шупашкар хули варринче вырнаҫтарнӑ Амӑшӗн монуменчӗн копийӗ.

Саламлатпӑр

Юратнӑ кӗрӗве, йыснана – Анаткас Турай ялӗнче пурӑнакан **Слава Гаврилович МИХАЙЛОВА** 60 ҫулхи юбилей ячӗпе саламлатпӑр, ӑнӑҫу, ырлӑх-сывлӑх, вӑрӑм ӗмӗр сунатпӑр. Малашне те мӑшӑрупа, ачусемпе, мӑнукусемпе ырӑ курса савӑнса пурӑнмалла пултӑр.

**Салампа: Елчӗк, Вӑрнар, Йӗпреҫ енчи тӑванӗсем, хӑтисемпе тӑхлачисем.**



Юратнӑ мӑшӑра, аттене, маҫака, асаттене – Анаткас Турай ялӗнче пурӑнакан **Слава Гаврилович МИХАЙЛОВА** 60 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн тухакан чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Яланах сывлӑхлӑ, хавас кӑмӑл-туйӑмлӑ пурӑнмалла пултӑр. Ҫирӗп сывлӑх, телей сунатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, ывӑлӗпе кинӗ, хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, 3 мӑнукӗ, тӑванӗсем.**



Юратнӑ мӑшӑра, хисеплӗ аннене, хаклӑ асаннене – Муркаш салинче пурӑнакан **Людмила Леонидовна МИХАЙЛОВӐНА** 55 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей сунатпӑр. Телейпе ӑнӑҫу яланах санпа пӗрле пулччӑр, ӗмӗтӳсем ҫитсе пыччӑр. Пуриншӗн те сана ҫӗре ҫити пуҫ тайса тав сӑмахӗ калатпӑр.

**Салампа: мӑшӑрӗ, виҫӗ хӗрӗ, кӗрӳшӗсем, Костьӑпа Паша мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

Ҫырӑнтару

**Хаклӑ вулаканӑм!**

**Райхаҫата иккӗмӗш ҫур ҫултан илсе тӑма ҫырӑнтарас тапхӑр малалла пырать. Ҫырӑнтару хакӗ унччченхиех – 191 тенкӗ те 70 пус (ултӑ уйӑха).**

# Чуманкасси хĕрĕ – «Вице-Чăваш пики – 2011»

Республикăра



*Апрелĕн 22-мĕшĕнче Шупашкарта «Чăваш пики – 2011» республика конкурсĕ иртрĕ. Муркаш район ятне «Муркаш пики – 2011» конкурс çĕнтерӳçи Лариса Цветкова хӳтĕлерĕ.*

*Лариса Чуманкассинчи вăтам шкулта 11 класра вĕренет. Вĕренӳре те, обществăлла ĕçре те маттур хĕр çак конкурсра та район ятне ямарĕ. Конкурсăн пур тапхăрĕнче те хăйне тивĕçлĕ тытса, хăйĕн пултарулăхне те, чăваш халăхĕн историйĕпе йăли-йĕркине лайăх пĕлнине те кăтартса пама пултарчĕ. Республикăн тĕрлĕ районĕсемпе хулисенчен конкурса хутшăннă ытти хĕрсенчен чи çамрăкки «Вице-Чăваш пики – 2011» пулма тивĕçрĕ. Муркаш хĕрĕсен республикăра та ырăпа палăрма май пуррине Лариса тепĕр хут çирĕплетрĕ. Тăрăшсан, малалла ăнтăлсан пĕтĕмпех пулать.*

*Пирĕн пике çак ята çĕнсе илнинче пулăшакансен тӳпи те пысăк. Акă «Расна» эстрадăпа фольклор ушкăнĕ Ларисăна хавaспах пулăшрĕ. Хатĕрленӳ ĕçĕнче Чуманкассинчи шкул администрацийĕ те, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ те, культурăпа архив ĕçĕн пайĕ те чылай тăрăшрĕç. «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă обществи те пулăшу пачĕ. Кунсăр пуçне пĕрлешӳ ертӳçи Н.Г. Ванеркин «Вице-Чăваш пики – 2011» ята тивĕçнĕ Ларисăна ноутбук парнелерĕ. «Сундырь – Хлеб» пĕрлешӳ, «Сывлăх» ФСК дирекцийĕ, О. Афанасьева уйрăм предпринимателĕн «Ольга» парикмахерскийĕ те тав сăмахне тивĕç.*

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Ял тăрăхĕсенче – профилактика кунĕсем

# Хăйне евĕр иртрĕ

Апрелĕн 21-мĕшĕнче Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче черетлĕ профилактика кунĕ иртрĕ. Унта хутшăнакансем ушкăнсем çине пайланса тĕрлĕ ялсенче, çемьесенче, ытти объектсенче пулса вĕсенчи пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлпе паллашрĕç.

Ял тăрăхĕ ыттисемпе танлаштарсан пысăках мар, унта пурăнакансен хисепĕ 1052 çынпа танлашать. Пĕтĕмĕшле илсен кунти лару-тăру ытла вичесĕр мар, çапах та çакă лăпланса лармаллинех пĕлтермест.

Профилактика кунне хутшăнакансем ĕç тапхăрĕнче административлă 12 протокол çырчĕç, вăл шутра обществăлла вырăнта ӳсĕр çӳренĕшĕн 6 протокол, йытăна саккун ыйтнă пек усраманшăн 1 протокол, уйрăм хушма хуçалăхра пушар хăрушсăрлăхне пăхăнманшăн 1 протокол тата ытти хăшпĕр çитменлĕхшĕн.

Ял тăрăхĕнче ăнăççăр 2 çемье шутланать. Чылай çул хушши çак шутра тăракан пĕр çемьере пулса курнă хыççăн хăш-пĕр ырă улшăну палăрчĕ. Çапах та пăшăрхантараканни те çук мар, темиçе çул ĕнтĕ ача пособине илессине йĕркелеймеççĕ. Документсене вăхăтра пухса тивĕçлĕ çĕре çитернĕ пулсан сахал тупăшлă çемьешĕн уйăхсерен паракан ача пособийĕ пысăк пулăшу пулнă пулĕччĕ. Ку хутĕнче те вĕсем пире сăмах парса шантарчĕç, çитес вăхăтра çак ĕçе тăвассине палăртрĕç.

Çавăн пекех учетра тăракан çул çитмен çамрăксем патĕнче те пулма тӳр килчĕ пире.

Профилактика кунĕн пĕтĕмлетӳ ĕçĕ вара ытти ял тăрăхĕнчисемпе танлаштарсан хăйне евĕрлĕ иртрĕ. Ырă йăлана кĕнĕ ĕç саманчĕ пысăк залра йышлă халăхпа иртетчĕ. Районтан килсе çитнĕ ĕçлĕ ушкăн вунă çынран тăрать пулсан кунти общественность çак хисепрен те сахал пулчĕ, пĕчĕк пӳлĕмри калаçу кичеммĕн иртрĕ. Çапла вара район шайĕнче палăртнă ĕç çине çиелтен пăхни палăрчĕ.

– Ку ял тăрăхĕнчи профилактика ĕçне тепĕр хут иртттерни те ытлашши пулмĕ. Çак ĕç районтан килнисемшĕн мар, вырăнти халăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулмалла, – терĕ обществăлла хăрушсăрлăх милици уйрăмĕн ертӳçи В.А. Григорьев.

Ял тăрăхĕнчи пĕр депутат вара ӳсĕр пуçпа пырса ларма тата шухă сăмахсемпе перкелешме те именмерĕ. Тен вăл вырăнти çынсемшĕн ырă тĕслĕх пулма, районтан килнисене хăй «пултарулăхĕпе» тĕлĕнтерме шутланă? Çакăн пекрех иртрĕ черетлĕ ĕç кунĕ Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Ăнланса ĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ

Ял тăрăхĕсенче

Кăçалхи хĕл кунĕсем юртан тулăх пулчĕç темелле. Çуртсене, уйрăмах çулсене юр час-часах хĕве-хĕве лартрĕ. Çынсене те, автотранспорта та çӳреме çăмăл килмерĕ. Çулланнă çынсем калană тăрăх кун пек çанталăк юлашки 15 çул хушшинче пулман.

Юнкă ял тăрăхĕн территорийĕнчен те çак асар-писер çанталăк айккинчен иртсе каймарĕ ĕнтĕ. Ялти çулсене кăçал тасатса тăма «Энергосервис» чикĕллĕ яваплăхлă общество тендр выляса илнĕччĕ. Унăн ертӳçи пулса Владислав Анатольевич Кислов ĕçлет. Çак коллектива манăн пĕтĕм ял çыннисем ячĕпе пысăк тав сăмахĕ калас килет. Мĕншĕн тесен вĕсене çирĕплетсе панă çул участокĕ кирек епле çанталăкра та транспорт çӳреме юрăхлă пулнă. Юр питĕ вăйлă хӳсе лартнă чухне те шăнкăравласанах çул уçмалли техника хатĕрĕсем çийĕнчех çула тухнă, ĕçе пикеннĕ.

Юлашкинчен çавна кăна каласа хăварас кăмăл пур. Пĕр-пĕрне ăнланнă чухне кирек епле ĕç те уçăмлă пулса пырать.

**В. ФОМИН,**
**Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.**

Сирĕн ыйтусене хуравлатпăр

# Мĕн вăхăтран тĕрĕслеççĕ?

***Саккун тăтăшах улшăнса тăрать, уйрăм предпринимательсен, ытти юридически лицосен ĕçхĕлне планпа пăхнă тĕрĕслеве мĕн вăхăтран иртттерме юрать? Хăш чухне вара тĕрĕслев ĕçĕ пире чăрмав кăна кӳрет.***

**М. ИВАНОВА.**
Мăн Сĕнтĕр сали.

2008 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнчи 294 – ФЗ № саккунăн 9 статйин 2 пункчĕпе килĕшӳллĕн планпа пăхнă тĕрĕслеве виçĕ çулта пĕр хутран ытлашши иртттермеççĕ.

Анчах та хăйсен ĕçне сывлăха сыхлас, вĕрентӳ енĕпе тата социаллă сферăра йĕркеленĕ бизнесменсен ĕç-хĕлне ытларах та тĕрĕслеме юрать. Çакăн пирки çӳлерех асăннă саккунра тĕплĕн çырнă. Çитес вăхăтра правительство шайĕнче хăш-пĕр ĕç-хĕле «уйрăмах тĕрĕслемелли» перечене тата вăхăта палăртаççĕ.

***Эпĕ пушар хуралĕн ĕçченĕсем юридически лицо территорине пырса пăхмасăрах тĕрĕслев иртттерме пултараççĕ тенине илтнĕччĕ. Çакă чăн е суя сăмах?***

**С. ПЕТРОВ.**
Катькас ял тăрăхĕ.

Çапла, пултараççĕ. Кун пирки çӳлерех асăннă саккунăн 11 статйинче тĕплĕн çырса кăтартнă, ăна документарлă тĕрĕслев теççĕ. Тĕрĕслев тапхăрĕнче ревизорсем организаци е предприниматель докуменчĕсене тĕрĕслеççĕ, маларах иртттернĕ тĕрĕслев акчĕсене тата административлă майпа йĕркене пăснă ĕççене ытларах тимлĕх уйăраççĕ. Çавăн пекех инспектор ытти документсем тĕлĕшпе запрос тăратма пултарать. Запроспа пĕрле документарлă тĕрĕслеве иртттерме йышăннă пичетпе çирĕплетнĕ приказ е распоряжени копийĕ пулмалла.

Çакăн пек çырăва илнĕ организаци ĕçченĕсен 10 кун хушшинче тĕрĕслев иртттерекенсем патне документ копийĕсене тăратмалла. Ун пирки çӳлерех асăннă саккунăн 11 статйин 5 пунктĕнче çырнă. Тĕрĕслевçĕ патне тăратакан хутсем çинче коммерсант, юридически лицо е унăн представителĕ алă пусни пулмалла.

**Район прокуратурин материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Эсир мĕнле шутлатăр?

# Намăс мар-ши кун пек калаçма?

Хальхи çамрăксем ватă çынсен пенсийĕсене ӳстерсе панăшăн ӳпкелешсе калаçнине тăтăшах илтме пулать. Ĕлĕк эпир, хĕрарăмсем, хальхи пек ача пăхса ларман. Çĕрĕн-кунĕн тенĕ пекех ĕçленĕ. Ĕçлесех пенсие тухнă.

Çимелли те çитсе пыман, тумланмалли те пулман. Хутма вутă сахаллипе ачасем пӳртре шăнса ларни те пулман мар. Çăпатапа шкула çӳренĕ, çапах вĕренме тăрăшнă.

Халĕ çамрăк хĕрарăмсем пурăнма йывăр тенине илтсен кулнăнах туйăнать. Намăс мар-ши вĕсене çавăн пек калаçма? Ниçта та ĕçлеме çӳременнисем те сахал мар. Газĕ пур, çутă пур. Ача çуратнăшăн укçа тӳлеççĕ, пӳрт-çурт çавăрма патшалăх пулăшать, çĕр участокне тӳлевсĕрех уйăрса параççĕ. Ачи 18 çула çитиччен ача укçи парса тăраççĕ. Хăшĕсем ача укçи кĕтсе анчах пурăнаççĕ. Ниçта та ĕçлемеççĕ, ачисене те йĕркеллĕ пăхмаççĕ, укçине илсен те ĕçсе кăна яраççĕ.

Пире вара ача пăхма никам та пĕр пус та паман. Ачисене те хальхи пек çемьере пĕршер е икшер мар, тăватшар е пилĕкшер пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă.

Ялта сĕт сутнă укçапа тытăнкаласа пурăнатпăр тенине те час-часах илтетпĕр. Ĕлĕк вара ачасене çитермелли продукцие те патшалăха памалла пулнă. Çăмартине те, аш-пăшне те, çуне те парса тăнă. Халĕ ĕçлемесĕрех пурăнма пулать. Çавăнпа ытларахăшĕ ĕçлеме çӳремест те. Пирĕн вăхăтра вара ун пек пулман.

**Çыраканĕсем: ИВАНОВА, ПЕТРОВА, СЕРГЕЕВА.**

Следстви комитетĕнчен

# Çынлăха çухатсан

Мартăн 31-мĕшĕнче пирĕн районти «Мускав – Уфа» автоçул çинче вырнаçнă апатланăвăн пĕр предприятийĕнче вăй хуракан хĕрарăма Мускав облаçĕнчен килнĕ, эрех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ арçын пусмăрлама тăнă.

Çамрăк арçын банкет пӳлĕмĕнче пулнăскер хĕрарăм çи-пуçне хывма пикенет, анчах та лешĕ унран тарма хал çитерет. Çапах та 1975 çулта çуралнă пӳтсĕр арçын хĕрарăмран хăпмасть, ăна хăваласа çитсе пăвать, çапать, çарамаслантарать. Юрать-ха ӳсĕрскер хăй палăртнă ĕçе вĕçне çитереймест. Анчах та вĕчĕрхенӳ туйăмĕ çиеле тухнă арçын çакăнпа çырлахмасть, апатлану предприятийĕн хуçин курткине вăрлать, Муркаш районĕнчен тухса Мускав хули еннелле машинăпа ларса тарать.

Çапла вара пысăк тиев турттаракан машинăна юсанă çĕре килнĕ арçын тĕлĕшпе халĕ йĕрке хуралçисем ĕçлеççĕ.

**В. ДОЛГОВ,**
**уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсен следователĕ,**
**юстици капитанĕ.**

Апрелĕн 25-мĕшĕ – Чăваш чĕлхи кунĕ

# Чăваш чĕлхи пулсан пирĕн халăх пурăнать

Çак куна халалласа тунти кун районти историпе краеведени музейĕнче «Чăваш халăхĕн чĕлхипе культури. Истори, йăла-йĕркесем, аталану çулйĕрĕ» темăпа çавра сĕтел пулчĕ. Унта чăваш чĕлхине чăннипех те сума сăвакан ĕçченсем пухăнчĕç: Чăваш Республикин Муркаш районĕн национальноççен ĕçĕн канашĕн членĕсем, районти таврапĕлӳçĕсем, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем, культура ĕçченĕсем, вĕренекенсем, çыравçăсемпе сăвăççем. Çавра сĕтеле хутшăнакансем хăйсен шухăш-кăмăлне, чун ыратăвне палăртрĕç.



Чи малтанах пухăннисене канаш ертӳçи, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л.Ю.Тарасова чăваш халăхĕн сумлă та пысăк пĕлтерĕшлĕ уявĕ ячĕпе саламларĕ, канашăн малашнехи ĕç планĕпе паллаштарчĕ.

Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ уява паллă тăвасси чăваш халăхне çутта кăларақанĕ тата чăваш алфавитне йĕркелекенĕ И.Я. Яковлев кун-çулĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Ун çинчен кашни чăваш çыннин пĕлмелле, урăхла вара майĕ те çук. Пархатарлă вĕрентекен пирки Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăн сектор ертӳçи Э.П. Димитриева каласа пачĕ. Çавăн пекех чăваш халăхне çутта кăларакан кун-çулне Муркашри вăтам шкул ачисем ытарлăн сăнарласа пачĕç.

«Литературăллă Чăваш Ен: 2009 çулхи чи лайăх вуланакан кĕнеке» конкурса пĕтĕмлетнĕ май Лилия Юрьевна çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе асăнмалăх парнесем парса чысларĕ, хăш-пĕр библиотекарьсем те дипломсемсĕр юлмарĕç.

Çавăн пекех çавра сĕтел ытти чылай ыйтăва хускатрĕ.

**Р. МАКАРОВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

